Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**.
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства.

**Автор: Лисина Ева Николаевна**

**Книга: Тепĕр çул та килетпĕр**

# Рассказ: Çĕньял ачисем

Аслă тӳпепе аслă çĕр хушшинче, Чăваш çĕршывĕнче, ларать Çĕньял, вунпĕр каслă ял.

Ун çине çӳлтен, самолет çинчен, пăхсассăн, вăл çĕр çумне лăпчăннă улăп-кайăк пек курăнмалла.

Кайăк ӳт-пĕвĕ – ял варри: хура кĕрен, хăмăр хуралтăсем çырма ик енĕпе ларса тухнă, кайăк çунаттисем – Шуркаспа Тукас – вĕç-хĕрсĕр вăрман çумне тăсăлса тухаççĕ.

Çутçанталăкпа туслă çак кайăк-ял: тĕсне, кăмăлне унпа килĕштерсе улăштарать.

Çуркунне вăл – лачкам йĕпеннĕ, халь-халь симĕс куçне уçса, хăватлă çунаттине сарса, янкăр тӳпене çĕкленес кайăк.

Хĕлле – лапсăркка шур кайăк, çунат вĕçĕсене кăвак тĕтрелĕхре пытараканскер.

Кĕркуннехи вăхăтра Çĕньял – вут-кайăк.

Пурăнаççĕ кайăк-ялта йăл-йăл куç харшиллĕ, утмăл-турат пек кăвак куçлă е кĕр каçĕ пек хура çӳçлĕ, хура куçлă та йăлтăр кулăллă хĕрачасем. Пурăнаççĕ унта ши-и! шăхăракан, пĕр-пĕринпе шăла çыртса çапăçакан, хĕрачасене ура явса ӳкерекен, кирлĕ пулсан пурне те хӳтĕлеме хатĕр паттăр арçын ачасем, ашшĕ-амăшĕпе тан ĕçлекен ачасем.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.